

# Эпир пулнă, пур, пулатпăр!

✓ КУН-ÇУЛ ТӲПИ…

## Иван Тенюшев:

# «Манăн пурнăç – вĕçленмен юрăсем…», е Аçта эсир, чăваш каччин пурнăçне çăлнă чăваш пикисем?

**Справка:**

**Иван Яковлевич Тенюшев** /сăн ӳкерчĕкре – сылтăмра/ **1923 çулхи кăрлач уйăхĕн 19-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи Патăрьел райончи Алманчă ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă. 1939 çулта Патăрьелĕнчи педагогика училищинчен вĕренсе тухнă. 1939–1942 çулсенче Елчĕк районĕнчи шкулсенче ĕçленĕ. 1942–1945 çулсенче Çурçĕр-хĕвел анăç, каярах иккĕмĕш Белоруссии фронтĕнче фашистсемпе кĕрешнĕ. Вăрçа Будапештра вĕçленĕ. 1951–1955 çулсенче И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче вĕреннĕ. 1962–1964 çулсенче Мускавра КПСС Тĕп комитечĕ çумĕнчи аслă парти шкулĕн журналистика факультетĕнче пĕлӳ илнĕ. 1967–1985 çулсенче Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетĕнче вĕрентнĕ, кунта Иван Яковлевич пуçарнипе тата çине тăнипе чăваш чĕлхипе литератури уйрăмĕнче студентсене журналистикăна вĕрентме тытăнаççĕ. 1980 çулта Львоври Иван Франко ячĕллĕ университетра истори ăслăлăхĕсен кандидачĕн ĕçне хӳтĕленĕ. 1996 çултан пуçласа тепĕр хутчен ЧПУра вăй хума тытăннă. Мĕн паян кунччен унтах тăрăшать, университетăн тава тивĕçлĕ профессорĕ.**



**Кашни çын пурнăçĕнче ĕмĕрĕпех асран тухман, манăçма пултарайман самантсем пулаççĕ. Шелсĕр вăхăт юххи те пĕтерейместь вĕсене. Республикипе паллă журналист, Çемен Элкер ячĕллĕ премил лауреачĕ, Чăваш патшалăх университечĕн журналистика факультечĕн профессорĕ, Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕ, çапăçусенче 3 хут аманнă, Хĕрлĕ çăлтăр, 1 степеньлĕ Отечественнăй вăрçă орденĕсемпе медальсене тивĕç пулнă Иван Яковлевич Тенюшев кун-çулĕнче те пур çавăн пек аса илӳ.**

– 1943 çулхи нарăс уйăхĕнче Кокушкино ялĕ çывăхĕнчи çапăçура мана мина ванчăкĕсем хырăмран амантрĕç, – аса илет 69 çул каялла пулса иртнине ветеран…

Аманнисене çапăçу хирĕнчен илсе тухасси уйрăм çынсем çинче пулнине тĕрлĕ литературăран, фильмсенчен пĕлетпĕр эпир. Çапăçу хĕрнĕçем хĕрсе, аманнисем нумайланса пынă вăхăтра васкавлă пулăшу тенине, çывăхри сиплев çуртне илсе каяссине кĕтсе илме çăмăлах пулман пулĕ çав. Чăваш каччи йывăр суранне пăхмасăр хăй тĕллĕн пĕр çырма патне шуса çитме вăй çитеретех. Çывăхрах снаряд ӳкнипе пăр арканать, шыв персе тухать. Йĕпеннипе тата йывăр сурана пула пĕтĕм кĕлеткипе чĕтренĕ салтак. Кĕçех, телее, çав тĕле рота старшини Алексей Мелехов пырса тухать. Çуна çинчен апат термосĕсене антарать те /пурпĕр пурте наступленире, кама апат çитермелле/ хурала пĕр салтака тăратса хăварса, чăваш салтакне 4 километртри санвзвода леçет. Шăннă çĕр çине улăм сарнă «санвзвод»-хӳшĕре вилме хăварнине кăна туйса-ши, ăна санбатах çитерет. Паллах, чăрăш, хыр лăссисем пăрахса янă саксем лартса тухнă вăрăм çĕр пӳртре те кирлĕ пек пулăшу пулма пултарайман. Шăпах çакăнта И. Тенюшева паллакан полковник /вăл та аманнă/ асăрхать. Ăна валли чĕнсе илнĕ икĕ вырăнлă «Аннушка-2» самолета чăваш ачине те вырнаçтарать вăл.

Селигер кӳлли çывăхĕнчи Осташков хулинчи эвакогоспитальте васкасах операци сĕтелĕ çине хураççĕ Тенюшева. Вăраха тăсăлать операци. Мина ванчăкĕсем хăйсемпе пĕрле ӳте шинельпе гимнастерка чĕрĕлтĕкĕсене сĕтĕрсе кĕнĕ те, вĕсене чылайччен шыраççĕ, тупсан – пинцентпа турта-турта кăлараççĕ. Наркоз вăйĕ пĕтсе çитет – вăл çаплах операци сĕтелĕ çинче. Скальпель чуна кăлармалла асаплантарса çаплах чĕрĕ ӳте касать, пинцет мина ванчăкĕ е çип пĕрчи тупса туртать. Пит, çамка вĕри мунчари пек тарланă, ыратнăран кăшкăрса яманни кăна…

Эрне йĕркеллех иртет темелле. Сывлăх та лайăхланнă пек. Анчах кĕçех каллех температура, вар-хырăм хăпарса каять, суранран йывăр шăршăллă пӳр юхма пуçлать. Рентген хырăмра ют япаласем тата пуррине палăртать. Вăй-хал шалтах пĕтет, чун хавшасах каять. Иртнĕ операцире епле нушаланнине аса илсе тепĕр операци тутарма килĕшменнине пĕлтерет чăваш каччи. Аслă хирург, медицина службин майорĕ, хĕрарăм тепĕр операци кирлех тесе ӳкĕтленине пăхмасăр ниепле те килĕшмест. «Питех тăрăшма ывăл мархха, вилес тетĕр пулсан – сирĕн ирĕк», – пăрăнса кайнă аслă хирург. Çук, чунĕ чурăс пулман хĕрарăм-хирургăн. Хулара икĕ чăваш хĕрне шыраса тупать, хăйне, тĕрĕсрех чăваш каччине, пулăшма ыйтать. Çемçе печени, çăратнă сĕт илсе пыраççĕ хĕрсем ентешĕ выртакан палатăна. Çук, апат та çиесшĕн пулмасть лешĕ, вилмех хатĕрленнĕ. Ир, каç пыма тытăннă хĕрсем. Юлашкинчен ăна операци тумаллах шухăш патне илсе çитереççĕ: «Операци пӳлĕмне хамăрах илсе кайăпăр. Хирург пулăшаканĕсем те хамăрах пулăпăр. Сывалсан иксĕмĕртен кирек хăшне качча ил…». Операци, чăн та, ăнăçлă иртет. Каччă майĕпен апат çиме, тăрса ларма тытăнать, вăй илет. Çапла икĕ чăваш хĕрĕ чăваш каччине вилĕм аллинчен туртса илме пултараççĕ…

– Хĕрсем иккĕшĕ те Елчĕк районĕнченччĕ. Пĕри – Зайцева хушаматлăскер, Кушкă ялĕнчен, Миловидова – Патреккелĕнчен. Вăрçă хыççăн шырарăм, çук, йĕрне-çулне тупаймарăм вĕсенне, – хумханса аса илет Иван Яковлевич, çак кунсенче тăхăр теçетке тултаракан вăрçă ветеранĕ. – Тĕл пулса калаçас, чун-чĕрене лăплантарас килет те, пĕлместĕп, ăçта халĕ çав чăваш хĕрĕсем? Тен, ку тĕнчерен тахçанах уйрăлса кайнă вĕсем?..

Кашни тĕл пулмассерен тĕлĕнетĕп вĕрентекенĕмрен. Çаплах калас килет – Вĕрентекенĕмĕр, мĕншĕн тесен, çӳлерех асăнтăмăр ĕнтĕ, шăпах Иван Яковлевич пуçарнипе тата çине тăнипе ЧПУн чăваш чĕлхипе литератури уйрăмĕнче студентсене журналистикăна вĕрентме тытăнаççĕ. Çулĕсем малаллах чупаççĕ пулин те, чун хавалне çухатмасть «шурсухалăмăр». Халĕ те ЧПУра çамрăксене журналистика ăсталăхне вĕрентет, кĕнеке хыççăн кĕнеке пичете хатĕрлесе вĕсене кун çути кăтартать, вулакан патне çитерет. «Кун-çул тӳпи» ярăма валли çак материала хатĕрленĕ май пĕрре-иккĕ кăна тĕл пулмарăмăр унпа. Ĕненĕр, Патăрьел çĕрĕ çинче çуралнă паттăр арăн кун-çулĕ пархатарлă та анлă. Тĕрĕссипе, роман тесен темиçе томлă роман çырма пулать ун çинчен. /Сăмах май, эпĕ çӳлерех каласа кăтартнă пулăма икĕ томлă «Вĕсем виççĕн çеç юлчĕç» романра та сăнласа кăтартнă хăй И.Я. Тенюшев/.

**90 çул… Аса илӳсем, аса илӳсем… Паянхи кун-çул тӳпинчен пăхсан… Тата мĕн туса çитереймен-ши? Пурнăç тĕллевĕсем пысăк та çутă Иван Яковлевичăн. Пурнăçлантăрччĕç вĕсем. Унăн «тыл» тени çирĕп. Çемьере ялан туслăхпа килĕшӳлĕх, ăнланулăх хуçаланаççĕ. Мăшăрĕ – Ольга Захаровна /сăн ӳкерчĕкре ывăлĕпе/ та кăмăллă, сăпайлă чăваш хĕрарăмĕ. Ачисемпе, мăнуксемпе савăнса кăна пурăнмалла теме пулать. Темле пулсан та кун-çулăр вăрăм, сывлăхăр çирĕп пултăр, Иван Яковлевич! Тав сире, Вĕрентекенĕмĕр!**

*Лидия ФИЛИППОВА калаçнă.*

*Тенюшевсен çемье архивĕнчи сăн ӳкерчĕкпе усă курнă.*

## Хĕл Мучи çул çӳреме вĕрентнĕ

Çĕнĕ çул тĕлĕнче Хĕл Мучипе тĕл пулни кĕтменлĕх мар. Асамлă çав сăнара культура ĕçченĕсем калăпланипе пĕрлех патшалăхăн çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн инспекцийĕн ĕçченĕсем те вăхăтлăха Хĕл Мучие çаврăннă. Анчах елка тавра ташласа çаврăнма мар, водительсемпе çуран çӳрекенсене çул-йĕр хăрушсăрлăхĕ пирки асăрхаттарма. Пакунлă Хĕл Мучисем водительсене Çĕнĕ çул ячĕпе асăнмалăх парнесем – çул-йĕр правилисен кĕнеки, эмел пуххи, машина кантăкĕ çинчи пăра ирĕлтерекен шĕвек тата ытти – валеçнĕ. Çул-йĕрте ача-пăча та шар курнине шута илсе пакунлă Хĕл Мучисем пĕчĕккисемпе те калаçу ирттернĕ.

## Вăрман хуçалăхĕ техникăпа пуянланнă

Çĕнĕ çула Чăваш Енĕн вăрман хуçалăхĕсем çĕнĕ техникăпа кĕтсе илнĕ. «Форест» маркăллă трактор уççисене республика ертӳçи Михаил Игнатьев Улатăр, Вăрнар, Йĕпреç, Канаш, Шăмăршă, Çĕмĕрле, Етĕрне, Шупашкар тата Опытнăй вăрман хуçалăхĕсене панă. Асăннă техникăна вăрмансене пушартан хӳтĕлес ĕçе явăçтарĕç. Кунсăр пуçне вăрман хуçалăхĕсене пĕлтĕр 4 çăмăл машинăпа тивĕçтернĕ. Пĕлекенсем каланă тăрăх, вĕсен отраслне харăсах çавăн чухлĕ техникăпа пуянлатни чылайранпа пулман.

*Вера ТИТОВА.*

✓ ТĔРЛĔРЕН

## 18 автобуспа 5 троллейбуслăх укçа

Иртнĕ çулăн вĕçĕнче Чăваш Ене федераци хыснинчен 60 миллион тенкĕ укçа килсе çитнĕ. «Кĕмĕле» «Чăвашавтотранс» предприятин техника паркне пуянлатма ярĕç – тупрапа 18 автобуспа 5 троллейбус туянĕç. Республикăн Транспорт министерстви хыпарланă тăрăх, субсидие РФ Транспорт министерствипе Чăваш Ен Правительстви унччен тунă килĕшĕве тĕпе хурса уйăрнă.

## Тăрăнсене… министерство саламланă

Пирĕнтен чылайăшĕ тӳре-шарана ятлама-вăрçма кăмăлларах парать-тĕр. Анчах ырă ĕçшĕн тав тăвакансем те пур. Иртнĕ çул вĕçĕнче, акă, Шупашкар районĕнчи Шинер Тăрăн ялĕнче пурăнакансем республикăн Строительство, архитектура тата çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министерствине газсăр урамсене «кăвак çулăм» çитернĕшĕн тав тунă, сăмах май çĕнĕ çулпа саламланă. Министрăн тивĕçне вăхăтлăх пурнăçлаканĕ Олег Марков парăмра юлас темен – шинер тăрăнсем патне уяв саламĕ ăсатнă.

## Тискер кайăкшăн та kaçармаççĕ

Çул-йĕр çинче çынсем кăна мар, тискер чĕр чунсем те шар кураççĕ. Пĕлтĕр, акă, республикăри автоçулсем çинче 2 пăши, 3 хыр сысни, 1 хир качаки вилнĕ. Виçĕм çул, сăмах май, 5 пăшипе 3 хир сыснине машина таптанă. Айăплисене явап тыттарасси пирки каласан, Чĕр чун тĕнчине хӳтĕлес енĕпе ĕçлекен патшалăх службин ĕçченĕсем суда 10 хутчен тавăçпа тухнă, 161 пин тенкĕ шыраса илмелле тунă.

## Ачасемпе ача пек пулма вĕрентнĕ

«Ачапа – ача пек, аслипе – аслă пек», – тесе ырлаççĕ сăмаха виççе калаçакан çынна ваттисем. Çак ăсталăх çул çитменнисемпе ĕçлекен специалистсене уйрăмах кирлĕ. Иртнĕ çул вĕçĕнче ЧР Вĕрентӳ министерствин Психологипе реабилитаци тата коррекци центрĕнче районсемпе хуласенчи опекăпа попечительство тытăмĕнче ĕçлекенсен семинарĕ иртнĕ. Унта пурĕ 87 специалист пухăннă, хăйсен ĕçĕнче куллен тĕл пулакан ыйтусен хуравне шыранă.

*Вера ЭВЕРККИ.*